Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнченпе тухать

57 (7911) № ✻ Юн кун, 2011 çулхи утă (июль) уйăхĕн 27-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

## Пĕрремĕш çаврăм, пĕрремĕш бункер

Фоторепортаж



*Акă вăл – пĕрремĕш бункерти тырă.*

*Николай Павлов комбайнер хăйĕн савăнăçне пытараймасть.*



*Район администрацийĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ, ял хуçалăх пайĕн пуçлăхĕ Владимир Калинин тата предприяти ертӳçи Николай Ванеркин вырма пахалăхĕпе кăмăллă.*



Хăвăрт иртет вăхăт. Асрах-ха хирти ĕç шавĕ, çурхи ака-суха ĕçĕсем. Сисмерĕмĕр те, вырмана тухма та вăхăт çитрĕ. Юлашки кунсенче тăнă шăрăх çанталăк кĕрхи культурăсене хăвăрт пиçсе çитме май пачĕ.

Акă ĕнер «Моргаушская» чăх-чĕп фабрикин кĕрхи тулă пуссинче комбайн кĕрлевĕ илтĕнме тытăнчĕ. Предприяти ертӳçи Николай Ванеркин та хирте.

– Пирĕн кунта «Московская-39» кĕрхи тулă 210 гектар çинче. Тухăç япăх пулмалла мар. Сахалтан та гектартан 30 центнера яхăн тухатех. Çанталăк май парсан пĕр эрне хушшинче тулăна пуçтарса илме май пур. Кайран вара 360 гектар урпа юлать,– пĕлтерчĕ васкаварлăн ертӳçĕ.– Вăл та кун пек çанталăкпа тепĕр икĕ эрнерен пуçтарса кĕртме хатĕр пулмалла.

Хăватлă «Дон» комбайн хирте тикĕссĕн пырать. Николай Павлов комбайнерăн ĕç опычĕ пĕчĕк мар. Ĕç çи валли вăл техникăна лайăх хатĕрлесе çитернĕ. Кăлтăксем пулма кирлĕ мар.

– Турри çанталăкне парсан пирĕн те чăрмав пулас çук,– тет вăл куларах.

Çаврăм хыççăн çаврăм, бункер хыççăн бункер... Сарă тулă кĕлетсене ăсатăнать. Кĕрхи ĕç çи – çĕр ĕçченĕ çултаlăкĕпе вăй хунин, тар тăкнин результачĕ. Аллисем çăмăл пулччăрччĕ пуçласа ĕçе тытăнакансен.

**В. ШАПОШНИКОВ.**
**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**

## Юсав ĕçĕсене вăхăтра пурнăçлама май пур

**Вĕренӳ çулне хатĕрленетпĕр**

***Шкулсем çĕнĕ вĕренӳ çулĕнче ачасене йышăнма хатĕрленеççĕ, ача сачĕсенче юсав ĕçĕсем вĕçленсе пыраççĕ. Çак лару-тăрупа район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн ертӳçине З.Ю. Дипломатовăна паллаштарма ыйтрăмăр.***

**– Шкулсемпе ача сачĕсенче çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленес тапхăр вĕçленсе пырать. Пĕтĕмĕшле ӳкерчĕк мĕнлерех?**

– Пĕтĕмĕшле каласан вĕрентӳ учрежденийĕсем çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленессипе тĕрлĕ енлĕ ĕçсем пурнăçларĕç: вак-тĕвекрен пуçласа пысăк мероприятисем таранах. Халĕ шăпах çак ĕçсене пĕтĕмлетсе хак парас вăхăт.

Район администрацийĕн пуçлăхĕн ятарлă хушăвĕпе вĕрентӳ учрежденийĕсем çĕнĕ 2011–2012 вĕренӳ çулне хатĕррине йышăнма комисси йĕркеленĕ. Ун йышĕнче район администрацийĕн вĕрентӳ пайĕн, патшалăх пушар надзорĕн представителĕсем, Роспотребнадзорпа Ростехнадзор специалисчĕсем, шалти ĕçсен пайĕн тата ФСБ сотрудникĕсем, ГОпа ЧС представителĕсем пур.

Комисси вĕрентӳ учрежденийĕсене йышăнма çирĕплетнĕ график тăрăх тухса çӳрет. Акă ĕнер специалистсем Атапай, Оринин, Москакасси, Юнкă, Нискасси, Мăн Сĕнтĕр, Мăн Хураçка, Ильинка шкулĕсенче, Вăрманкассинчи пуçламăш шкул-ача садĕнче, «Золушка», «Колокольчик», «Рябинушка», «Улыбка», «Мечта», «Тюльпан» ача сачĕсенче пулчĕç. Унти ĕçсемпе тĕплĕн паллашрĕç.

Тĕрĕслевсем хыççăн кашни кунах ЧР Вĕрентӳ тата çамрăксен политикин министерствине миçе вĕрентӳ учрежденийĕ çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕррине пĕлтеретпĕр.

**– Юсав ĕçĕсене вăхăтра туса ирттерме майсем пур-и?**

– Ку çул депутатсен районти Пухăвĕ йышăннипе вĕрентӳ учрежденийĕсен çурчĕсенче юсав ĕçĕсем ирттерме (ытларах çивиттисем юсаса çĕнетме) тата хутса ăшăтас тапхăра хатĕрленмелли ĕçсене пурнăçлама хушма укçа-тенкĕ уйăрса пачĕç – 2 миллион та 600 пин тенкĕ ытларах.

«Колокольчик», «Мечта», «Радуга» ача сачĕсенче çивиттисем юсамалла, «Путенере» чӳрече блокĕсене улăштармалла тата коммуникаци тытăмĕн юсав ĕçĕсене пурнăçламалла.

Мăн Сĕнтĕрти вăтам шкулта тата «Золушка» ача садĕнче хутса ăшăтас тапхăра хатĕрленнĕ май хĕллехи вăхăтра ăшă паракан пăрăхсене шалтан çуса тасатмалла. Иртнĕ хĕл çак вĕрентӳ учрежденийĕсенче температура режимĕ санитари правилисене тивĕçтерменни те пулнăччĕ. Хутса ăшăтас тапхăра хатĕрленессипе ытти хăш-пĕр вĕрентӳ учрежденийĕсенче те ĕçсем пыраççĕ.

Калайкассинчи вăтам шкулта шыв башнине юсанă, çивитти çинче юсав ĕçĕсем пурнăçламалла.

Чуманкассинчи тата Турайри вăтам шкулсенче юсав ĕçĕсем активлă тапхăрта. Асăннă шкулсем вырнаçнă ял тăрăхĕсем «Комплекслă компактлă застройка» конкурсра çĕнтернĕ. Çавна май хальхи вăхăтра шкулсенче чӳрече блокĕсене пластик чӳречесемпе улăштарас, алăксем çĕнетес, коммуникаци сечĕсене юсас тата ытти ĕçсем пыраççĕ.

**– Ача сачĕсенче черетсем пурри те хăй пирки мантармасть.**

– Черет «Путене», «Солнышко», «Мечта» тата «Колокольчик» ача сачĕсенче пур. Ку çул «Колокольчикра» (Москакасси) пушă пӳлĕм юсаса 25 ачаран тăракан ушкăн валли пӳлĕм хатĕрлеççĕ. Çапла вара йывăрлăха малтанлăха та пулин сирме май пулать.

Малаллахи çулсем пирки калас пулсан районти хăш-пĕр ача сачĕсене реконструкцилеме палăртнине тата çĕнĕ ача сачĕ тăвассине республикăри ятарлă программăна кĕртме май тупрăмăр. 2012 çулта Муркашра 60 ача вырнаçмалăх çурта реконструкцилесе ача сачĕ тумалла. 2013 çулта Мăн Сĕнтĕрти ача садĕнче пристрой хăпартса хута ямалла. Унта 100 ача валли вырăн пулмалла. 2014 çулта Москакассинчи ача садĕнче 40 ача вырнаçмалăх пристрой туса хута кĕртмелле. Çав çулах Муркашра çĕнĕ ача сачĕ тума палăртса хунă. Вăл 200 пепке йышăнмалла.

Çак пысăк ĕçсем тĕрлĕ бюджет шучĕпе пулаççĕ. Вырăнти бюджетран кирлĕ укçа-тенкĕн 20 процентне уйăрса параççĕ, ыттине – республика бюджетĕнчен.

**Н. НИКОЛАЕВА**
**калаçнă.**

## Влаç органĕсен порталĕ çинче чăвашла çĕнĕ сайт уçăлчĕ

Ĕнер Чăваш Республикин влаç органĕсен порталĕ çинче чăвашла çĕнĕ сайт уçăлчĕ. Унта Чăваш Ен пурнăçĕпе унăн аталанăвĕ, Чăваш Республикин Президенчĕн, пĕтĕмĕшле правительство ĕçĕ-хĕлĕпе тĕплĕн паллашма май пур. Сайтра эсир чăваш халăхĕн историне, культурине, йăли-йĕркине тата ытти пултарулăхне тупма пултаратăр. Çавăн пекех сайтра тĕрлĕ йышши разделсем пур. Калăпăр, хыпарсем, хаçатра пичетленнĕ материалсем. Паянхи кун тĕлне сайтра Чăваш Республикин Президенчĕн М.В. Игнатьевăн Чăваш Республикин Патшалăх Канашне янă «Çамрăксене шанмалла!» Çырăвĕ, Республика пуçлăхĕн интерактивлă кун кĕнеки, электронлă сăмахсар (словарь) баннерсем пур. Кашни баннера кирлĕ пек ятарлă материалсем кĕртме тăрăшнă.

**Патшалăх пулăшăвĕ**

## Çĕр ĕçченне пулăшусăр хăвармĕç

***Патшалăх ял хуçалăхĕнче тăрăшакансем тата ялта пурăнакансем валли тĕрлĕ хушма пулăшу уйăрать. Çавна май çурт-йĕр çĕклекенсене, выльăх-чĕрлĕх усракансене, тĕрлĕ культура акса-лартса ӳстерекенсене çак тата ытти тĕлĕшпе тăкакланă укçа-тенкĕн пĕр пайне саплаштарать. Çапла майпа патшалăх çĕр ĕçченне курăмлă пулăшу кӳрет. Района çак тĕллевпе кăçалхи пĕрремĕш çур çулта сахал мар укçа-тенкĕ килчĕ. Çакăн пирки тĕплĕнрех каласа пама эпĕ район администрацийĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕнчен, ял хуçалăх пайĕн ертӳçинчен В.А. КАЛИНИНРАН ыйтрăм.***

**– Владимир Аркадьевич, пирĕн района мĕн чухлĕ укçа-тенкĕ тивĕçрĕ ку тĕлĕшпе?**

– Патшалăх уйăрнă пулăшу укçин калăпăшĕ пĕчĕк мар, июлĕн 1-мĕшĕ тĕлне 40 миллиона яхăн куçнă. Палăртса хăваратăп, ку тĕллевлĕ усă курмалли укçа-тенкĕ. Федераллă бюджетран 21 млн та 545 пин те 823 тенкĕ, республика бюджетĕнчен 18 млн та 417 пин те 655 тенкĕ уйăрнă.

**– Выльăх-чĕрлĕх отрасльне аталантарма мĕн чухлĕ пырса тивет-ши?**

– Районти ял хуçалăх производство кооперативĕсемпе агрофирмăсенче, чикĕллĕ яваплăхлă обществăсенче тата хресчен (фермер) хуçалăхĕсенче, уйрăм хушма хуçалăхсенче выльăх-чĕрлĕх аталантаракансем валли 17 млн та 276 пин те 348 тенкĕ уйăрнă. Ăна ăратлă ĕнесен шутне тытса тăма, тĕрлĕ выльăх ăратне улăштарма тата тытма, пĕтĕлентерме усă кураççĕ.

**– Ӳсен-тăран отрасльне мĕн чухлĕ пырса тивет тата?**

– Минераллă удобрени, пысăк пахалăхлă вăрлăх, ӳсен-тăрана сыхламалли тĕрлĕ им-çам туянма, страхлама тата мелиораци ĕçĕсене пурнăçлама 7 млн та 342 пин те 516 тенкĕ усă курнă.

Укçан ытти пайне вара тĕрлĕ программăпа килĕшӳллĕн çурт-йĕр çĕклекенсене пулăшма уйăрнă. Малашне те патшалăх пулăшăвĕ çĕр ĕçченне аякра хăвармасса шанас килет.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА**
**ыйтса пĕлнĕ.**

**Прокуратурăра**

## Ачасен канăвĕ пĕр кăлтăксăр ирттĕр

Çак кунсенче прокуратура, Роспотребнадзор тата ытти ответлă ĕçченсем «Солнышко», «Березка», «Ильинский», «Лесная сказка», «Алый парус» ачасем канакан вырăнсене тĕрĕсленĕ. Тĕрĕслев кашни сменăрах иртет пулин те вĕсем хăш-пĕр çитменлĕхе тупса палăртнă.

Çапла вара санитари нормине пăхăнманран административлă пĕр ĕç, пушар хăрушсăрлăх нормине пăхăнманран административлă тăватă ĕç пуçарма тивнĕ. Çавăн пекех вĕсен ертӳçисем тĕлĕшпе представленисем тăратнă, çитменлĕхсене пĕтермеллине палăртнă.

**А. ТИХОНОВ,**
**прокурор пулăшуçи, 3 класлă юрист.**

**Саламлатпăр**



Хаклă та юратнă аннене, кукама, хунямана – Мулкачкасси ялĕнче пурăнакан **Римма Димитриевна СОРОКИНĂНА** 70 çулхи юбилей ячĕпе ăшшăн саламлатпăр. Сывлăху çирĕп пултăр, кĕрекӳ çăкăр-тăвартан нихăçан та ан татăлтăр. Кун-çулу вăрăм та такăр килтĕр.

**Саламлаканĕсем: хĕрĕ, кĕрӳшĕ, мăнукĕсем, кинĕ, кĕçĕн мăнукĕ.**



Хаклăран та хаклă çыннăмăра – Шарпаш ялĕнче пурăнакан **Леонид Самуилович ЕФИМОВА** сумлă юбилей ячĕпе чун-чĕререн саламлатпăр. Çирĕп сывлăх, иксĕлми телей, ăнăçу сунатпăр. Кун-çулу вăрăм та такăр пултăр. Ачусен, мăнукусен ырлăхне курса савăнмалла пултăр. Кĕрекӳ çăкăр-тăвартан нихăçан та ан татăлтăр.

**Саламлаканĕсем: 3 ывăлĕ, хĕрĕ, 3 мăнукĕ, Ефимовсен, Федоровсен çемйисем.**

# Чăн-чăн ăстасемех

**Пурăнаççĕ ялта ветерансем**



*Шыв валакĕ – пластик кĕленчесенчен.*



*Ватлăх çулĕсене пĕрле килĕштерсе пурăнса ирттереççĕ 71 çулхи Лев Петровичпа 67 çулхи Валентина Павловна.*

*Тĕрлĕ ӳкерчĕксем вырăн тупнă стенасем çинче.*



Пирĕнтен кашниех расна. Кашнийĕнех хăйĕн интересĕсем, ăнтăлăвĕсем, тавра курăмĕ. Пур чухне те эпир ăна курмастпăр та. Çынпа калаçсан, пĕрле ларса канашласан, унпа çывăхрах туслашсан, унăн шухăш-кăмăлĕпе кăсăклансан вара çав çын пирки унччен пĕлменнине чылай пĕлме пултаратăн.

Сăмахăм вара паян Юнкă ялĕнче пурăнакан Валентина Павловнăпа Лев Петрович Соколовсем пирки.

Валентина Павловна унччен Мăн Сĕнтĕрте пурăннă, чылайранпа медицина сестри пулса ĕçленĕ. Юнкăра пĕччен пурăнакан амăшĕ Елена Степановна Степанова патне 7 çул каялла пурăнма килнĕ. Сăмах май Елена Степановна вăрçă участникĕ пулнă, телеграфист пулса çапăçнă. Шел пулин те кăçал апрель уйăхĕнче вăл пирĕнтен яланлăхах уйрăлса кайнă.

Лев Петрович Сĕнтĕрти юсавпа техника предприятийĕнче тимĕрçĕре тăрăшнă. Сумлă ĕçпе яланах хисепре пулнă.

Халĕ икĕ ватă килти хуçалăхра иккĕшех тăрмашса пурăнаççĕ. Ватă çынсем тесе калаймăн. Хуçалăхра та, картишĕнче те пĕтĕмпех тирпейлĕ те йĕркеллĕ. Йăран çинче çум курăк таврашне кураймăн. Улми-çырли те, пахча çимĕçĕ те пахчара çителĕклĕ.

Анчах та сăмахăм ун пирки мар. Эпир юлашки вăхăтра пластик савăт таврашĕпе тавралăха вараласа пĕтерни пирки нумай калаçатпăр. Вăл çĕрмест, ăна çунтарма юрамасть. Чăннипех те проблема темелле. Лев Петровичпа Валентина Павловна вара пластик кĕленчесене хаваспах пухаççĕ. Мĕн тума тетĕр-и? Акă вĕсем пластик кĕленчесенченех касса çыпăçтарса хăйсен аллипех теплица та ăсталанă. Хăяр, помидор вырăн тупнă унта. Çумăр шывне пухма та усă кураççĕ пластик кĕленчесемпе. Теплицăри çимĕçсене те унпах шăвараççĕ. Шыв валакне те пластик кĕленчесемпе усă курса ăсталанă. Чăннипех те, шухăшласа пăхсан, кăштах фантази пулсан – хуçалăхра тем тума та юрăхлă япала.

– Эпир пластик кĕленчесене пухнă çумăр шывĕпе шăварма кăна мар, хамăр çăвăнма та унпах усă куратпăр. Çемçе вăл,– кăмăллăн калаçать Валентина Павловна.

Уйрăм калаçу – Лев Петрович пирки. Ачаллах вăл ӳкерме юратнă. Çак туртăм унăн ватлăх çулĕсенче те çухалман. Вĕсем патне пӳрте кĕрсен картинăсен галерейине лекнĕнех туятăн. «Баян», «Охота на львов», «Леша Попович», «Девятый вал», «Рожь» тата ытти нумай картина стенасем çинче вырăн тупнă.

Лев Петрович хĕрхенекен хытă çын мар. Картинăсенчен чылайăшне вăл юлташĕсене те парнеленĕ.

Ăстаçă картинăсем ӳкерме сăрă та, рамăсем те хăех хатĕрлет.

– Алли çыпăçать,– пĕлтерет ун пирки мăшăрĕ.

Ăстасемпе сыв пуллашма та вăхăт çитрĕ. Вĕсем вара пахчана васкарĕç. Утă вăхăчĕ вĕт-ха. Çулса пăрахнă курăка таварса типĕтмелле, купаламалла.

**В. ШАПОШНИКОВ.**

# Чыслă тивĕçе пурнăçламаллах

**Çурхи призыв**

Апрелĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа июлĕн 15-мĕшĕччен çул çитнĕ яшсене çара ăсатас ĕçсем пычĕç. Унăн итогĕсем пирки çавна каласа хăварасшăн. Чăваш Республикин Çар комиссариачĕ пире панă плана эпир 100 проценчĕпех пурнăçлама пултартăмăр. Çар ретне ăсатнă çамрăксенчен 64 проценчĕ çирĕп сывлăхлисем, 12 проценчĕ аслă пĕлӳ илнĕ, 22 проценчĕн ятарлă вăтам професси пĕлĕвĕ пур, 24 проценчĕ пуçламăш професси пĕлĕвĕ илнĕ.

Çавна та каласа хăвармалла. Муркаш районĕпе илсен çул çитнĕ çамрăксенчен 22 проценчĕ сывлăхĕ япăххипе çар ретне тăма юрăхсăр пулчĕ. Вĕсене пурне те запаса куçарнă.

Çамрăксене çар ретне ăсатма хатĕрлес ĕçсене районти призыв комиссийĕ вăхăтра туса пычĕ. Çар комиссариачĕн ĕçченĕсемпе пĕрле Юнкă, Мăн Сĕнтĕр, Ярославка ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем, вĕсен специалисчĕсем те çак ответлă ĕç çине пысăк тимлĕх уйăрма тăрăшрĕç. Çав вăхăтрах салтака каймалли çамрăксене учета илесси, вăхăтра повесткăсем парасси Оринин, Москакасси ял тăрăхĕсенче тивĕçлĕ шайра мар.

Çавна та палăртмалла. Салтака каяс мар тесе тĕрлĕ сăлтав шыраса пăрăнса çӳрекен яшсен хисепĕ чакмасть-ха. 2010 çулхи кĕрхи призыв вăхăтĕнче кун пеккисен шучĕ 35 çын пулнăччĕ. Ку çурхи призывра 15 çамрăк çар ретне тăрас мар тесе тарса-пытанса çӳрерĕ. Вĕсем кашни ял тăрăхĕнчех пур. Акă кун пеккисем Йӳçкассинче 1, Ильинкăра 2, Москакассинче 2, Çатракассинче 3 пулнă. Çамрăксен ашшĕ-амăшĕпе калаçнинчен те усси сахал. Вĕсенчен чылайăшĕ хăйсен ачисене салтака ярас шутлă мар.

Кунта çакна та каласа хăвармалла. Çак тарса çӳрекен çамрăксен пĕрин те сывлăхĕ çар ретне тăма юрăхлă мар. Тĕрĕссипе вĕсене тахçанах запаса куçарса çар билечĕ памалла. Ашшĕ-амăшĕсем, яшсем хăйсем те çакна ăнланмаççĕ, вăйпа çар ретне илсе каясран хăраççĕ. 2010 çулта 35 ачаран 20-шне запаса куçартăмăр.

2011 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕнчен кĕрхи призыв пуçланмалла. Кĕркуннехи призыв тĕлне салтака кайма вăхăт çитнĕ çамрăксене пурне те саккуна пăхăнса Çар комиссариатне вăхăтра килсе хăйсен сывлăхĕсене тĕрĕслеттерме, кирлĕ документсене тăратма сĕннĕ пулăттăм. Çар ретне тăрассинчен тарса çӳрени уголовлă ĕç пуçарасси патне илсе пыма пултарни пирки самантлăха та манас марччĕ.

**В. АНДРЕЕВ,**
**Чăваш Республикин Çар комиссариачĕн Муркашпа Элĕк районĕсенчи пай пуçлăхĕ.**

# Пĕтĕмпех патшалăх пенсисене финансласси пирки

## Сирĕн ыйтусене Пенси фончĕн специалисчĕсем хуравлаççĕ

**– Граждансен хăйсен ирĕкĕпе хывнă взносĕсене патшалăх финансласси Программипе килĕшӳллĕн патшалăх вăхăтран вăхăта индексацилеме палăртать-и?**

– Кунта тĕрлĕ механизмсене пула сирĕн пулас пенсин тĕрлĕ пайĕсем ӳсесси пирки сăмах пырать. Патшалăх пенсин страхланă пайне индексацилет. Финанслассин Программипе килĕшӳллĕн вара взноссем ĕç пенсийĕн пухăнакан пайĕ çине куçаççĕ тата сирĕн пухăнакан пенси пулса тăраççĕ. Пенсин пухăнакан пайне хăвăр палăртнипе ертсе пыракан компание уйăрса паратăр: ку вăл патшалăхăн ертсе пыракан компанийĕ (Внешэкономбанк – ВЭБ), харпăр хăйĕн ертсе пыракан компанийĕ е патшалăхăн шутланман пенси фончĕ пулма пултарать. Кирек епле пулсан та çак укçа-тенкĕне тĕрлĕ хаклă хутсемпе финанс инструменчĕсене инвестицилеççĕ, çапла майпа инвестици тупăшĕ илеççĕ. Хаклă хутсен шутне патшалăх палăртать, çапла вара инвестици шанчăклăхĕ те ӳсет. Инвестицирен илнĕ тупăш харпăр хăйĕн пенси счечĕ çинче те палăрать. Ку тупăш та сирĕн пулас пенси виçине ӳстерме каfive.

Сăмахран, 2009 çул итогĕсем тăрăх ВЭБ граждансен пухăнакан пенсийĕн виçисене анлă инвестици мелĕпе çулталăкрин 9,52 проценчĕ чухлĕ тупăшланă. Ку вăл инфляци шайĕнчен пысăкрах.

**– Патшалăх финанслассин Программипе килĕшӳллĕн гражданин хывнă укçа-тенкĕ ăçта упранатьши?**

– Патшалăх финанслассин Программипе килĕшӳллĕн хывнă взноссем вĕсем сирĕн пулас пенсин пухăнакан пайĕн пĕр пайĕ пулса тăраççĕ. Пухăнакан пенсипе мĕнле усă курассине пĕрлехи правилăсемпе пăхса хунă. Обязательнăй пенси страхованийĕн пенсин пухăнакан пайĕ тĕлĕшпе те ку çаплах. Çак правилăсемех Программăпа килĕшӳллĕн гражданин хăйĕн ирĕкĕпе хывакан взноссене, патшалăх финансланине тата ĕç паракан хывакан взноссене те пырса тивеççĕ. Вĕсене сирĕн пенси счечĕ çинче шута илеççĕ тата тупăш илес тĕллевпе инвестицилеççĕ. Сирĕн пухăнакан пенсие гражданин хăй палăртнă тăрăх ертсе пыракан компани е патшалăхăн шутланман пенси фончĕ инвестицилесе тăрĕ.

Пулас пенсин пухăнакан пайне упрама тата хушса пыма тĕрлĕ вариантсем пур.

Пĕрремĕшĕ: пухăнакан пенси патшалăхăн ертсе пыракан «Внешэкономбанк» (ВЭБ) компанийĕн аллинче.

Иккĕмĕш вариант: пухăнакан пенси харпăр хăйĕн ертсе пыракан компанийĕ е патшалăхăн шутланман пенси фончĕн аллинче. Кун пек тума Раççей Пенси фондне заявлени çырса парас пулать. Заявленирех хăварăн пухăнакан пенсие шанса паракан организацие кăтартмалла. Енчен те эсир кун пек заявлени çырман пулсан сирĕн пухăнакан пенси патшалăхăн ертсе пыракан компанийĕ – «Внешэкономбанк» аллинче.

Эсир маларах харпăр хăйĕн ертсе пыракан компанине шанасси пирки заявлени çырса панă пулсан патшалăх финанслассин Программипе килĕшӳллĕн уйăракан пĕтĕм укçа-тенкĕ сумми те çав ертсе пыракан компание е патшалăхăн шутланман пенси фондне куçĕ.

Сирĕн пухăнакан пенси патшалăхăн шутланман пенси фончĕн аллинче пулсан пухăнакан пенсие инвестицилессине тата шута илессине, çавăн пекех сирĕн ĕç пенсине шутласа парассине тата тӳлесе тăрассине вăлах туса пырĕ.

**В. ШАПОШНИКОВ хатĕрленĕ.**

**«Чувашэнерго» уведомляет**

**Линии электропередачи являются источником повышенной опасности**

**Вниманию населения, руководителей предприятий, организаций, сельхозкооперативов, владельцев земельных участков**

**Филиал ОАО «МРСК Волги» - «Чувашэнерго»** уведомляет о том, что по землям и населенным пунктам Чувашской Республики проходят воздушные линии электропередачи (ЛЭП) различного напряжения (110, 35, 10, 6, 0,4 кВ).

Повреждения высоковольтных и низковольтных электрических сетей вызывают перерыв в обеспечении электроэнергией городов, населенных пунктов, промышленных и сельскохозяйственных предприятий, приводят к несчастным случаям с людьми и пожарам.

Во избежание повреждений ЛЭП в пределах охранной зоны по 20 метров от крайнего провода линии напряжением 35-110 кВ, 10 метров – напряжением 6-10 кВ и 2 метра – напряжением 0,4 кВ запрещается:

- возводить любые постройки, прокладывать дороги, производить работы с использованием грузоподъемных и землеройных машин, совершать проезд машин и механизмов, имеющих общую высоту от поверхности дороги более 4,5 метров, устраивать стоянки автотранспорта, загромождать подъезды к опорам;
- производить посадку и вырубку деревьев, разводить огонь, устраивать свалки, располагать полевые станы и загоны для скота, складировать корма и удобрения.

Посторонним лицам запрещается находиться на территориях и в помещениях электросетевых сооружений, открывать двери трансформаторных пунктов, производить самовольные включения и отключения коммутационных аппаратов.

Запрещается приближение к опорам ЛЭП, имеющим оборванные провода, на расстояние менее 20 м.

**Граждане!** Помните, что оборванные и провисшие провода ЛЭП представляют опасность для жизни. Опасность поражения электрическим током может возникнуть и тогда, когда ЛЭП исправна, но расстояние от человека до провода искусственно сокращается, что происходит при подъеме на опору, находящуюся под напряжением.

**Механизаторы!** Не допускайте наездов автотехники и тракторов на опоры ЛЭП, так как это приводит к длительным перерывам в обеспечении электроэнергией потребителей и к несчастным случаям.

**Директора школ, учителя и родители!** Предупреждайте детей об опасности поражения электрическим током, запрещайте им влезать на опоры и трансформаторные пункты, набрасывать на провода ЛЭП проволоку и другие предметы, открывать помещения электроустановок и проникать в них.

**Запрещается** прикасаться к спускам заземления, проложенным по опорам, а так же к железобетонным опорам.

При производстве работ в охранных зонах ЛЭП предварительно обращайтесь за письменным разрешением к владельцам ЛЭП. Обо всех замеченных Вами нарушениях, возгораниях, угрожающих электрическим сетям, и при обнаружении оборванных проводов ЛЭП обращайтесь по адресам:

1. Северное производственное отделение, г. Чебоксары, ул. Гладкова, д. 13, т. 8 (8352) 56-29-73.
2. Южное производственное отделение, г. Канаш, ул. Железнодорожная, д. 267А, т. 8 (83533) 2-14-74.
3. Моргаушское производственное отделение, т. 8 (83541) 69-2-55.

# Пурнăç çěнěлěх шырама хистет

## Пěчěк тата вăтам бизнеса – анлă çул

***Пěчěк тата вăтам предпринимательство ěçě районта анлăлансах пырать. Харпăр хăй ěçне уçса çěнě çул-йěр шыракансене патшалăх та аякка тěксе хăвармасть, вěсем валли тěрлě пулăшу уйăрать. Районти предпринимательсен ěçěпе тěпленěрех паллаштарма эпě район администрацийěн экономика пайěн ертӳçинчен Э.И.Симаковăран ыйтрăм, акă мěн пěлтерчě вăл:***

– Районта уйрăм предпринимательсен хисепě 821 танлашать. Пěчěк тата вăтам предприятисен хисепě 135. Çак предприятисенче 2860 çын вăй хурать е çакă район экономикинче тăрăшакансен 34 процентě пулать. Предпринимательсем халăха тěрлě услугăпа тивěçтереççě.

Иртнě çул çак пěчěк бизнес субъекчěсем пěтěмпе 242,9 миллион тенкěлěх тěрлě ěç пурнăçланă. Çакă вăл районта туса илнě пěтěмěшле продукцин 25,6 процентěпе танлашать. Кăçалхи пěрремěш çур çулта вара 118,3 миллион тенкěлěх пулнă.

Ку сферăра ěçлекенсен вăтам ěç укçи калăпăшě 7250 тенкěпе танлашать. Çакна ведомствăсем хушшинчи оперативлă комисси тěрěслесе тăрать.

Харпăр хăй ěçне пуçлас текенсем валли патшалăх тěрлě грант уйăрать. Иртнě çул пěчěк бизнесăн 9 представителě республика тата федераллă бюджетсенчен 1800,0 пин тенкěлěх грант çěнсе илчě. Пěрремěш çур çулта конкурса вара 6 представитель хутшăнма пултарчě, унăн пěтěмлетěвě каярах паллă пулě.

Бизнес ěçне йěркелесе ярасси çăмăл мар, çавна май 2008 çулта районта информаципе тата консультаципе тивěçтерекен бизнес-инкубатор хăй ěçне пуçларě. Предпринимательство ěçне пуçăнас текенсем унта тивěçлě пулăшу илме пултараççě. Иртнě çул пěчěк предпринимательствăн 122 представителě унăн пулăшăвěпе усă курма пултарчě.

Йывăр вăхăт пулсан та пěчěк тата вăтам бизнес сферинче 2010 çулта çěнěрен 13 суту-илӳ точки уçăлнă, ěçлес текенсем валли 27 ěç вырăнě тупăннă. Вěсенчи инвестици тӳпи 8,850 миллион тенкěпе танлашрě. Пěрремěш çур çулта 4 предприяти хута кайрě, 6 хушма ěç вырăнě пулчě.

Иртнě çул ваккăн тавар сутасси 667,0 миллион тенкěлěх, пěрремěш çур çулта 359,6 миллион тенкěлěх пулнă. Пěтěмěшле тавар çаврăнăшри пěчěк бизнес тӳпи 18 процентпа танлашать.

Муниципаллă заказсене пурнăçласси япăх мар пулса пырать, иртнě çулхи кăтарту пěчěк бизнесра вăй хуракансен тӳпи 24, 3 миллион тенкěпе танлашать е çакă пěтěмěшле калăпăшăн 36 процентě пулать.

Алкоголь продукцине сутма районта 33 предприяти ятарлă лицензи илнě, вěсенчен 31-шě – пěчěк тата вăтам предпринимательство субъекчě. 164 лавккара унпа суту-илӳ тăваççě, 41 предприяти пěчěк бизнес сферине кěрет. Раççей Президенчě вара малашне ку енěпе çирěп саккун вăя кěртме палăртрě, çавна май 23 сехетрен пуçласа ирхи 8 сехетчен эрех-сăра продукцине сутма ирěк çук.

Пěчěк предпринимательствăра тăрăшакансем тăтăшах район тата ун тулашěнче иртекен тěрлě конкурссене хутшăнаççě. Республикăри халăх ыйтăвне алăри чěрě укçасăр тивěçтерессипе йěркеленě конкурсра Муркашри «Универмаг» чикěллě яваплăхлă общество 3 вырăн йышăнчě. Çавăн пекех ытти çěнтерӳçěсене те ырăпа палăртас килет.

Яллă вырăнсенче туризм ěçхěлне вăя кěртессипе те анлăрах ěçлеме пуçларăмăр. Акă иккěмěш çул ěнтě район «Çулталăкри чи лайăх инвестици проекчě» конкурса хутшăннă май 1 вырăна тивěçет. Малашне те ку енěпе çине тăрсах ěçлěпěр.

Эпě вара уйрăмах çамрăк çынсене предпринимательство ěçне пикенме сěнесшěн. Паллах çакă çăмăл ěç мар, çапах та хăвăр пултарулăха çěнě ěçре тěрěслеме тăрăшмалла. Енчен те ку ěç самантрах вăй илме пултараймарě пулсан ӳкěнме кирлě мар, çак енěпе ěçлекенпе, пирěн пай ěçченěсемпе канашлăр.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА ыйтнă.**

Культура хыпарěсем

# Библиотека сире кěтет!

Ача-пăча каникула хаваслă иртерме тăрăшать, çитес вěренӳ çулě валли вăй-хал, ăс-тăн пухать. Çитěнекен ăрăвăн пушă вăхăтне туллин иртерес тěллевпе Муркашри ача-пăча библиотеки çине тăрса тăрăшать, тěрлě ěçе вăя кěртет.

Акă кунта вăй хуракансем ачасем валли «Çулла, кěнеке тата эпě – туссем!» ятпа мероприятисен ятарлă пуххине йěркеленě.

Çак ěçпе килěшӳллěн кěнекесен илемлě куравне, викторинăсем, тěрлě вăйăсем, мультфильмсем пăхассине тата ыттине йěркеленě. 4 – 8 класра вěренекенсем валли «Ключ от лета» конкурс малалла пырать. Маттуррисене вара сентябрěн 1-мěшěнче палăртěç. Кунта çӳрекенсен алă усса кичеммěн ларма вăхăт пачах та çук. Ачасем! Пирěн алăксем сире валли ялан яр уçă!

**М. СКВОРЦОВА, методист.**

# Кěнеке – пěлӳ çăл куçě

Районти историпе краеведени музейěнче «Зиновья Васильевна Душкова çул çӳревě» ятпа кěнеке куравě уçăлчě. Июлěн 19-мěшěнче вара вăл куçарнă «Юмахсем» кěнеке презентацийě иртрě. Хайлав ăсти – анлă тавра курăмлă çыравçă тата историк. Вăл чěре ыйтнипе тěнчери тěрлě кěтесе курса çӳреме, мěн курнине ӳкерсе илме кăна мар, хăйěн шухăш-туйăмěсене кашни вулакан патне çитересчě тесе ырмиканми тăрăшать, ăсталăхěпе кěнеке тусěсене хăй патне илěртет. Унăн произведенийěсенче вара ытларах юрату вăй-халě палăрса тăрать. Самана юмахěсем кěçěннисене кăна мар, аслисене те тыткăна илеççě. Калем ăсти 50 ытла тěрлě кěнекене 140 пин тиражпа пичетлесе кăларма мехел çитернě.

Çыравçă ачалăхě Вăрмар районěнче иртнě, амăшě чăваш пулнă, ашшě – гагауз. Пěчěкренех вăл пěлӳ тěнчи енне туртăннă. Çакă вара ăна пурнăç тăршшěпех пулăшнă.

Курава йěркелеме Шупашкарти Ф. Павлов ячěллě музыка училищин преподавателě Т. Асламас тата З. Душкова çырнă юмахсене куçараканě В. Бахмисова пулăшрěç, кунта килнě хăнасем вара асăнмалăх кěнеке-парнесене тивěçрěç.

Çыравçă хайлавěсем вулакана хăй асамлăхěпе чăннипех те тыткăнлаççě. Унăн ăсталăхěпе тěплěнрех паллашас текенсем вăл çырнă кěнекесене историпе краеведени музейěнче туянма пултараççě.

Манăн унăн ěçěнчи хăш-пěр самантa палăртса хăварас килет.

«...Эпир кашнийě хамăрăн ырă кăмăл-туйăма пěр чěптěм те пулин парнелеме пултарсан, тěнчере çак сипетлěх ытларах пулнă пулěччě... Пулас пурнăç юмахри пек хитре пултăр тесен ӳсен-тăранпа, кайăккěшěкпе туслăн пурăнмалла»...», – тет Зиновья Васильевна.

**О. КЛЕМЕНТЬЕВА, методист.**

# Мěн пурнăçлани чикě мар

***Çак кунсенче районта пěчěк тата вăтам бизнес кунě иртрě. Ку ěçе Чăваш Республикин Экономика аталанăвě, промышленноçпа суту-илӳ министерствин представителěсем тата уйрăм предпринимательсем хутшăнчěç.***

Район администрацийěн экономика пайěн ертӳçи Э.И. Симакова ертсе пыракан ěç ушкăнě Чуманкасси ял тăрăхне çул çӳреве тухрě. Çак ял тăрăхне кěрекен Çěньял Апаш ялěнче пурăнакан, пурнăç уттипе тан пыракан Александр Анатольевич Иванов предприниматель хуçалăхěнче пулса курчě. Çавна май чылай кăсăклипе паллашма май килчě.

– Чăн та кунта малашлăха пăхакан пысăк тěллевлě ěçченсем пурăнаççě, çакă мана питě савăнтарать. Малашне вара пěчěк тата вăтам бизнес представителěсене татах та пысăкрах çитěнӳсем тума сěнетěп. Кунти кěтес те питě илěртӳллě, тăрăш, ан ӳркен кăна, – терě Чăваш Республикин Экономика аталанăвě, промышленноçпа суту-илӳ министрěн çумě А.А.Быченков пултаруллă ěçчен патěнче пулса курнă май.

Чи малтанах хушма хуçалăх таврашěнчи ешěл кěтес тыткăнларě: предпринимател пуçарăвěпе лартнă тěрлě йывăç-тěм, сенкер тӳпе евěр анлă та таса пěве, унта вěлтвěлт вылякан пулă, лере аякра ав шăнкăршăнкăр таса çăл куç тата ытти те. Кунти хуçалăхра çěкленě цех вара хăйне уйрăм вырăн йышăнать. Çакăнта тěрлě декоративлă çуртасем ăсталаççě, вěсен илемě тата хăйне евěрлěхě куçа тыткăнлать. Сăмах май çакна та палăртса хăвармалла. 2008 çулта А.А. Иванов хуçалăхěнче ăсталанă ěçсене ятарлă конкурса тăратнă, министерство предприниматель ěçне тивěçлипех хакланă, ěçе малашне татах та анлăлатма каялла тавăрса памалла мар пилěк çěр пин тенкě укçан парса хавхалантарнă.

Ăста предприниматель, мăшăрě Маргарита Валерьяновна тата икě хěрě аякри хăнасене пурне те асăнмалăх илемлě çурта-парнесем пачěç.

Лару хăй ěçне Муркаш салинче малалла тăсрě. Ăна район администрацийěн пуçлăхěн çумě Л.Ю.Тарасова уçрě тата ертсе пычě.

– Район администрацийě предпринимательство ěçне аталантарассишěн чылай тăрăшать. Унăн ěçě-хěлě район экономикин аталанăвне пысăк тӳпе хывать, унта пурăнакансен пурнăç условийěсене лайăхлатать, тěрлě пулăшу парать, – терě Лилия Юрьевна предпринимательсен ěçěхěлě малашне татах та ытларах аталанасса шанса.

Çавăн пекех ларура чылай ыйтăва пăхса тухрěç: пěчěк тата вăтам бизнеса кредит парасси, пěчěк тата вăтам бизнеса пырса тивекен саккунсенчи çěнěлěхсем, предприятисенчи ěç сыхлавě, продукци пахалăхě тата ытти те.

**Р. МАКАРОВА.**

# «Тăван ен пуянрах та илěртӳллěрех пултăр»



Эпě вара ăста, мал туртăмлă предпринимательпе тěплěнрех калаçрăм, ěç вăрттăнлăхне уçса пама ыйтрăм.

**– Çапах та мана парафинран ăсталанă теттесене эсир хăйне май чун кěртни тěлěнтерет. Александр Анатольевич, мěнрен пуçланчěха хăвăр пурнăçа çак тěлěнтермěшсемпе çыхăнтарни?**

– Тěрěссипе вара эпě Чăваш патшалăх университетěнче пěлӳ илнě вăхăтрах предприниматель ěçě тупăш пама пултарнине ăнкарса илтěм. Çуртан пěрремěш партине Шупашкара сутма патăм, 115 тенкě тупăш илтěм. Вăл вăхăтра вара аттен уйăхри ěç укçи 70 тенкěпе танлашнăччě.

Пурнăç вара çаплах пулса тухрě. Мăшăрăмпа иксěмěр 1988 çулта туй çул çӳревне Санкт-Петербург хулине кайнăччě. Çавăнта кăмăла кайрě те мана пěр çурта. Малашне ăна ăсталасси пуçăнчě.

**– Çавăн чухлě çуртана хăвăрах ăсталама вăхăт тупатăр-и?**

– Малтанах хамăр çемье вăй хурса ěлкěрнě ку ěçре. Халě çурта тăвакан цехра 4–5 хěрарăм вăй хурать. Ку ěç вěсене çывăхрах тата вěсем чăтăмлăрах та. Вěсен ěç укçи пилěк пин тенкěрен иртет, çакă хěл кунěнче начар мар тесе шутлатăп эпě.

Чи малтанах çурта макечěсене йăлт хам ăсталанă. Çавăн пекех манăн хамăн çывăх çыннăмсене ырăпа палăртас килет. Мăшăр илем тěнчине аван ăнланнăран интереслě тěрлě шухăш сěнет. Аслă хěрěм вара çак ěçе мěн пěчěккěллех курса çитěннěрен хăй ирěкěпе дизайнер ěçне суйласа илчě, халě çăмăллăнах тěрлě натюрморт, сувенир хатěрлет. Кунта ăсталанă çуртан ытларах пайне парне валли туянаççě. Кирек епле теттен те хăй вăхăчě. Çěнě Çул уявěнче ешěл чăрăш аван, Хěрарăмсен кунěнче вара тěрлě чечек, Юрату кунěнче чěре палли пулсан лайăх тата ытти те. Çулсеренех вара пěр-пěр чěр-чун çулталăкě пулать, çав паллă кунсем тěлне самай малтан хатěрленетпěр те. Анчах та тěрлě уяв иртсен вěсем тепěр тапхăр кирлех те мар. Хатěр продукцие ытлашши выртарни те хăш-пěр чăрмав кӳрет. Çавăнпа та мěн чухлě сутăннине кура виçеллě те вăхăтлă янтăлама тăрăшатпăр. Пирěншěн вара Çěнě çул уявě уйрăмах хěрӳ тапхăр шутланать.

**– Продукцие хатěрлеме пулать-ха, анчах ăна сутса вырнаçтарасси те çăмăл мар, ку енěпе мěнлерех çул-йěр шыратăр тата?**

– Пысăк пахалăхлă хатěр продукцие вăхăтра вырнаçтарасси малти вырăнта пулмалла. Эпě хам хуçалăхра ăсталанă çуртасене вырнаçтарассипе район, республика тата ун тулашěнче те пулса тěрлě килěшӳ тума ěлкěртěм. Хальлěхе ку ěç начар пырать тесе калас килмест.

**– Декоративлă çуртасем ăсталанине эсир хăвăрăн тупăш çăл куçě теме пултаратăр-и?**

– Вěсене ăсталани вара чи малтан чуна киленӳ парать, çавăн пекех тупăш та. Кашни тěрлě мěлкене тытса ларатăп, шухăша кайса начар пулăма самантлăха та пулин манма пултаратăп, мěншěн тесен çак эрешсенче эпě ыррине куратăп.

Декоративлă çуртасенчен çулталăкне вăтамран 300 пин тенкě тупăш илме пулать.

**– Пушă вăхăт сирěн пек çыннăн çук та пулě. Пурнăçа илемлěх тěнчипе çыхăнтарнисěр пуçне хăвăр пěвере пулă ěрчететěр, йывăç-тěм лартатăр, шур сухаллă качакасене усратăр, вěлле хурчěсемпе аппаланма та вăхăт тупатăр тата ытти çěнěлěхе алла илетěр?**

– Пурăнас текен çыннăн алă усса лармалла мар, çакна пире атте-анне вěрентнě, эпě вара хамăн ачасене çапла ăс паратăп. Ěçленипе пěрлех пушă вăхăт тупма та ěлкěретěп.

Пулă ěрчетесси вара манăн тахçанхи тěллев пулнă. Халě тинех ăна вăя кěртме пултаратăп пулас. Инçетрен туянса килнě карп пулă чěрěлчě, малашне аванах ěрчессе шанас килет. Çак пěтěмěшле ěç валли 58 пин тенкě патшалăх хушма пулăшу уйăрчě, 162 пин тенкине хамăр кěсьерен кăларса хума тиврě. Паллах ял çынни çакăнта килсе канассине эпě хирěç мар.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА калаçнă.**

# Ĕçпе тивĕçтерекен центртан – ĕçе хăнăхма

## Çамрăксене хумхантаракан ыйтупа

***Кашни çамрăк шкул пĕтернĕ хыççăн пĕр-пĕр вĕрентӳ учрежденийĕнче хăйне килĕшекен профессие вĕренес тесе ăс пухма тăрăшать. Анчах та аслă шкултан е колледж-техникумран вĕренсе тухсан та çул яри усă выртмасть çав. Ĕç тупасси, тин çеç вĕренсе тухнă çамрăксем калашле, «чĕр нуша» пулса тăрать. Диплома алла тытса ирĕксĕрех ĕçпе тивĕçтерекен центра кайма та тивет хăшĕсен. Унта вара пулăшу пурах.***



Акă июлĕн 21-мĕшĕнче те районти ĕçпе тивĕçтерекен центрта колледж е техникум пĕтернĕ выпускниксене районти предприятисене стажировкăна ярассипе вакансисен ярмăркине ирттерчĕç.

Малтанхи çулсенче те районти ĕçпе тивĕçтерекен центр выпускниксене стажировкăна вырнаçтарассипе тимленĕ: 2009 çулта – 76 выпускник, 2010 çулта 34 выпускник стажировкăра пулнă. Республика шайĕнче ятарлă программа ĕçлени пулăшу паратех.

Кăçал та акă «Пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăхăн ертсе пыракан компанийĕ» муниципаллă унитарлă предприяти, «Моргаушская» муниципаллă строительство организацийĕ тата Муркаш райповĕ стажерсене йышăнчĕç.

Стажировкăра хăйсене лайăх енчен кăтартсан çамрăк специалистсен ĕç вырăнне тупма май пур. Муркаш райповĕнче акă пĕлтĕр 11 выпускник ĕçе хăнăхнă пулсан вĕсенчен иккĕшĕ кунтах ĕçе вырнаçма пултарнă.

Райпо правлени председателĕн кадр тата социаллă ыйтусемпе ĕçлекен çумĕ А. Куликова пĕлтернĕ тăрăх вĕсем патĕнче кăçал пĕтĕмĕшле 12 стажер ĕçе хăнăхать мĕн.

– Ку таранччен пирĕн патра товароведсем ĕçе хăнăхрĕç. Автомашинăсене ремонт тăвакан слесаре те стажировкăна илме килĕшрĕмĕр. Ытларахăшĕ вара бухгалтерсем. Çамрăк специалистсем хăйсен пĕлĕвне ĕçре усă курма вĕренĕç. Малтанхи çулсенче пирĕн организацинче стажировкăра пулнисем хăйсене лайăх енчен кăтартнине палăртас килет. Алла диплом илессишĕн кăна вĕренменнине çирĕплетсе пачĕç вĕсем. Кăçал та ӳкерчĕк çапла пуласса шанатпăр, – тесе Алина Александровна çамрăксен вĕренӳ никĕсĕ япăх маррине палăртать.

Апла районти ĕçпе тивĕçтерекен центр тĕрлĕ предприяти-организаципе тачă çыхăнура ĕçлесе çамрăксене ĕçе вырнаçма пĕрремĕш утăм тума пулăшать. Ытти вара яшкĕрĕмрен хăйсенчен килет.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

**Сăн ӳкерчĕкре: «Стажировкăна – Муркаш райповне».**

**Автор сăн ӳкерчĕкĕ.**

## Редакци почтинчен

# Тухтăрсене – тав!

Çур çул хушшинче икĕ пысăк суран пулчĕ манăн. Пĕлтĕр июль вĕçĕнче хытă çĕр çине сулăмлăн ӳкнипе сылтăм пĕçĕ шăмми хуçăлчĕ. Хам тĕллĕн тăрайманран ывăлпа унăн юлташĕ асăрханullă çĕклесе пӳрте кĕртсе вырттарчĕç. Васкавлă пулăшу та вăхăтрах çитрĕ. Часах Мăн Сĕнтĕр больницине илсе кайрĕç (больница çывăхра пулни мĕнле лайăх!). Çĕрлене пăхмасăрах рентген ӳкерчĕкне турĕç. Альбина Михайловна Андреевăна пысăк тав. Больницăра манпа нумай аппаланчĕç, сылтăм ура çине йывăр япала çакса пĕççе тапранмалла мар туса вырттарчĕç. Минин Алексеевич Васильевпа Николай Ефимович Григорьев врачсене пысăк тав. Минин Алексеевич сĕннипе, тăрăшнипе Шупашкарти федераллă ортопеди центрĕнче сывалтăм, хуллен утакан пултăм.

Çур çул çитмерĕ татах тепĕр суран тупăнчĕ: сулахай ура çине ӳкрĕм. Ура тунин шăммисем çурăлнă, хуçăлнă, сыппи те мăкăлтаннă. Васкавлă пулăшу машинипе Александр Ежуков фельдшер Муркаша леçрĕ. Ун чухне Мăн Сĕнтĕр больницин хирурги уйрăмĕ вăхăтлăх ĕçлемен пек ăнлантăм. Каллех йывăр япала çакса выртмалла пулчĕ. Ăста врач аллине лекрĕм. Леонид Николаевич Андреев çийĕнчех операци турĕ, гипс та хучĕç. Чылай выртрăм. Врачсене те, медицина сестрисене те, санитаркăсене те ырă кăмăлĕсемшĕн пысăк тав.

Йывăр вăхăтра ачамсем те манпах пулчĕç, кăмăла тивĕçтерчĕç.

**Л. РОМАНОВА.**

Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕ, Шупуç ялĕ.






**ИЗВЕЩЕНИЕ О ПРОВЕДЕНИИ СОБРАНИЯ О СОГЛАСОВАНИИ МЕСТОПОЛОЖЕНИЯ ГРАНИЦЫ ЗЕМЕЛЬНОГО УЧАСТКА**

Кадастровым инженером Токмолаевой Л.И., г. Чебоксары, ул. Декабристов, д. 33а, E-mail: ingenercheb@ja.ru, тел.: (8352)28-06-06, номер квалификационного аттестата 21-10-34 в отношении земельного участка с кадастровым номером 21:17:072101:194, расположенного по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, с/т «Солнечный», участок 194, выполняются кадастровые работы по уточнению местоположения границы земельного участка.

Заказчиком кадастровых работ является гр. Алексеев Поликарп Васильевич, проживающий по адресу: Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. Тракторостроителей, д. 17/25, кв. 137.

Собрание заинтересованных лиц по поводу согласования местоположения границы состоится по адресу: Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. Декабристов, д. 33а, офис 303 «30» августа 2011 г. в 10 часов.

С проектом межевого плана земельного участка можно ознакомиться по адресу: г. Чебоксары. ул. Декабристов, д. 33а, офис 303.

Возражения по проекту межевого плана и требования о проведении согласования местоположения границ земельных участков на местности принимаются с «11» августа 2011 г. по «25» августа 2011 г. по адресу: 428022, г. Чебоксары. ул. Декабристов, д. 33а, офис 303.

Смежные земельные участки, с правообладателями которых требуется согласовать местоположение границы: земли коллективной совместной собственности с/т «Солнечный»; 21:17:072101:193 - участок № 193 в с/т «Солнечный»; 21:17:072101:195 - участок № 195 в с/т «Солнечный»; 21:17:072101:196 - участок № 196 в с/т «Солнечный».

При проведении согласования местоположения границ при себе необходимо иметь документ, удостоверяющий личность, а также документы о правах на земельный участок.

## Прогноз погоды

| | среда 27 июля | | | | четверг 28 июля | | | | пятница 29 июля | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Местное время | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 |
| Облачность % | | | | | | | | | | | | |
| Осадки мм | | | | | | | | | | | | |
| Температура °C | +23 | +29 | +33 | +25 | +22 | +30 | +34 | +26 | +22 | +30 | +34 | +25 |
| Давление мм | 751 | 751 | 749 | 748 | 746 | 745 | 743 | 742 | 741 | 741 | 739 | 740 |
| Влажность % | 77 | 69 | 47 | 80 | 83 | 61 | 39 | 71 | 80 | 60 | 38 | 75 |
| Ветер | В | В | В | Ю-В | ШТЛ | Ю-В | Ю | Ю | Ю-З | ШТЛ | З | З |
| м/с | 1 | 1 | 1 | 1 | 0 | 3 | 1 | 2 | 1 | 0 | 3 | 2 |
| Солнце восход/заход | | 04:47 | 21:11 | | | 04:49 | 21:09 | | | 04:50 | 21:07 | |
| Луна восход/заход | | 00:53 | 18:44 | | | 01:50 | 19:27 | | | 03:01 | 20:00 | |
| фаза | | | | | | | | | | | | |






* * *

**Продаю автомашину ВАЗ-21124 2006 года выпуска, пробег 27000 км, цвет серо-зеленый. Цена договорная. Тел.: 8-927-993-42-50.**

## Пĕлтерӳсем. Объявления

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно.**
**Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-656-13-84. 1-5.**

**Продаем комбикорма. Доставка. Тел.: 8-927-992-05-19. 2-5.**

* * *

**Тăвата уйăхри ăратлă икĕ качака таки сутатăп. Тел.: 8-960-300-96-80.**

* * *

**Продается сено в рулонах по 100-150 кг., люцерна – 2 руб. за 1 кг., разнотравье – 4 руб. за 1 кг. Самовывоз или доставка. Адрес: с. Чуманкасы, Вязов В.И. Тел.: 8-905-346-84-28.**

* * *

**Продается емкость для воды, длина 10м, ширина 1,5м, высота 1,5м. Тел.: 8-905-197-57-92.**

* * *

**Продается новый кирпичный дом с надворными постройками в с. Юськасы, дом газифицирован, уличное электроснабжение, земля в собственности, 0,40 га. Тел.: 8-902-660-53-57, 8-902-660-38-70. Цена договорная.**

* * *

**В д. Анаткасы продается бревенчатый дом, обшитый кирпичем, капитальный фундамент, надворные постройки, проведены газ, вода, электричество, 40 сот. земли, плодоносящий сад. Тел.: 8-908-309-70-45, 8-937-381-56-45.**

* * *

**Требуются рабочие на уборку картофеля в Спасский район, Крассный Ватрас. Тел.: 8-902-687-01-77.**

* * *

**Çулталăк çурăри хура-шăши тĕслĕ ăратлă романовски така июлĕн 23-мĕшĕнче çухалчĕ. Пуçĕ хура, çамки çинче шурă лаптăк пур. Куракансене çак телефонпа пĕлтерме ыйтатпăр: 8-917-650-80-75. Чурикасси ялĕ.**

* * *

**Продаю четырехмесячных индюков. Тел.: 8-961-345-45-09.**

* * *

**ООО «Энергосервис» реализует по заводским ценам кольца ж/б и крышки к колодцам, а/машину ГАЗ-52 (грузовая и специальная), печи банные металлические с емкостями (толщина 10 мм). Тракторы силовые ТМ-40–ТМ-400, оказывает услуги по бурению колодцев, перемотка эл. двигателей, электромонтаж внутренней и наружной электропроводки. Срочно требуются монтажники по сантехнике (полипропилен). Тел.: 8(83541)60-2-39, 8-905-342-98-11.**

* * *

**Администрация Болшесундырского сельского поселения извещает о проведении общего собрания долевиков СХПК «Сундырский», которое состоится 5 сентября 2011 года в 10.00 часов по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение, с. Большой Сундырь, ул. Советская, д. 16, в здании администрации Большесундырского сельского поселения.**

**В повестку дня включены вопросы:**

**1. О ходе выдела земельных долей на территории сельского поселения.**

**2. Изменения в законодательстве по выделу земельных долей.**

**3. Рассмотрение и утверждение списка невостребованных земельных долей.**

**4. Разное.**

**Адрес места ознакомления с документами Большесундырского сельского поселения: с. Большой Сундырь ул. Советская д. 16, время с 8-00ч до 17-00ч кроме субботы и воскресенья. Текст объявления размещен на информационных стендах сельского поселения.**

**Администрация Болшесундырского сельского поселения извещает о проведении общего собрания долевиков СХПК «Нива», которое состоится 5 сентября 2011 года в 11.00 часов по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение, с. Большой Сундырь, ул. Советская, д. 16, в здании администрации Большесундырского сельского поселения.**

**В повестку дня включены вопросы:**

**1. О ходе выдела земельных долей на территории сельского поселения.**

**2. Изменения в законодательстве по выделу земельных долей.**

**3. Рассмотрение и утверждение списка невостребованных земельных долей.**

**4. Разное.**

**Адрес места ознакомления с документами Большесундырского сельского поселения: с. Большой Сундырь ул. Советская д. 16, время с 8-00ч до 17-00ч кроме субботы и воскресенья. Текст объявления размещен на информационных стендах сельского поселения.**

* * *

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли населенных пунктов» с кадастровым номером 21:17:060402:251, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение, с.Большой Сундырь, ул. Советская, для строительства и обслуживания зданий и сооружений, площадью 40 кв.м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.

* * *

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:250801:404, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Александровское сельское поселение, земельный участок расположен в центральной части кадастрового квартала 21:17:250801, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 5355 кв.м.;

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.

* * *

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли населенных пунктов» с кадастровым номером 21:17:060401:555, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение, с. Большой Сундырь, ул. Новая, для огородничества, площадью 623 кв.м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.

ООО «Моргауши-Хлеб» коллективĕ Отарккăри çăкăр пекарнинче заведующи пулса ĕçлекен П.Н. Волковăн тăван

**ПИЧЧĔШĔ**

вăхăтсăр вилсе кайнă пирки çывăх çыннисемпе, тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.

**Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат**

**УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:**

Чăваш Республикин Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерстви.

ЧР Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерствин «Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ» автономи учрежденийĕ.

**Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.**

АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.
Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru

Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2009 çулхи раштавăн 7-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00073 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 1,0 пичет листи.

Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.

Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат чăвашла юн тата шăмат кунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ Макарова Р.А.
Пичете панă 26.07.2011 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин, чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4282.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.